# КАПКАН

24-мӗш № Ҫӗккапӗршӗн, 1927 ҫ. 3-мӗш ҫул тухаҫ.

## Ҫил-тӑманра.



— Астумасӑр такки тухса утнӑ та, шалт ҫухалса карӑм. Советах улӑштарса йанӑ мана.

# Хастарлă акитаттăр.

Косокласăв тийаккăн хăй аллинҫи хаҫата, тарăхнипе айакала вăрăнтарҫĕ те, унтан пуҫне ҫиксе пысăк шухăша карĕ. Ларсан, ларсан мăн хырăмлă ĕне пек хашт! хаш! сывласа илҫĕ.

— Мĕн есĕ?—каллех ҫĕрĕ-вилеллĕ ҫиркӳсем ҫинҫен ҫыраҫҫи мĕн? - терĕ интересленсе тийаккăн ҫумĕнҫе ларакан майри.

— Унтав та усалтарах—терĕ тийаккăн:—ратио ҫинҫен ҫыраҫҫĕ. Ратио вăл ҫавăн пек йапала... ҫавăн пек йапала... Пĕр сăмахпа каласан пит хă рушă, усал йапала.

— Мĕн йапала вара вăл, хурт—кăпшанкă-и, йе пит усал, ҫынна пĕтерекен ҫир?

— Плепарат йапала,--терĕ ăнлантарса тийаккăн,--анҫах вăл калама ҫук вăйлă, шуйттан хăваҫĕ йеврĕлĕ. Сăмахран, пирĕн йалти мушиксем ратио лартсан, нимĕнле пралуксăр Михал Иванҫҫă Калининпа, куҫа куҫăн тăрса калаҫнă пек калаҫма пултараҫҫĕ. Кама кирлĕ, ăна: пирĕн Косокласăв тийаккăн контр, самаконккă туса пурăнаť, ҫухăнсене улталаť, тесе калама пултараҫҫĕ. Кайран хурҫă «ҫуртасемпе» ҫавăтса кайсан: епĕ контр мар, самаконккă ытлашши ĕҫместĕп , тесе ĕнентерсе калама кансĕр. Сисет ман ҫĕре, пирĕн мушиксем вăл ратиона лартаҫҫех. Вуламалли ҫурт, киператтив та турĕҫ. Иалта «оссохим» пур, ратио та пулатех. Ун ҫухне вара, ан пăркалан. Мана та, паҫăшкăна та, йалти пуйансене те—пăккин!

Оспоти!—терĕ хăраса тийаккăн майри: ҫăнахах ун пекех пулаť-ши? Пралуксăрах тетĕн? Пур ҫĕртре те илтĕнет?

Темиҫе минут хушши иккĕш те нимĕн шарламасăр ларҫĕҫ. Иулашкинҫен, тийаккăн шĕлекпкине йарса тытрĕ те:

— Кайатăп йал тăрăх, ратине хирĕҫ мĕнле те пулин ҫармавсем вăхăтра тупма кирлĕ. Мушиксем хушшинҫе лайăхрах акитатси тусан, тен пăрахĕҫ вăл ĕҫе. Тур ҫырлахтăрах! Пирĕн йалтан турă сиртĕрех вăл ратине, терĕ тийаккăн хыпаланса.

Паҫăшкă йал тăрăх килĕрен ҫӳрет, вăл ҫаплă ораттăрсем пек йумахлаť.

— Есĕр хаҫат вуланă пулмалла? Пур ҫĕртре те рати ҫинҫен ҫыраҫҫĕ. Рати вăл калама ҫук усал, киревсĕр йапала, шуйттан хăваҫĕ йеврĕлĕ. Телекрах, телефон, електритсă—вĕсене ăслă ҫынсем шухăшласа кăларнă, унта сăмахсем пралук тăрăх ăҫта кирлĕ унта ҫупаҫҫĕ. Рати—нимĕнле пралуксăрах. Плепарата тĕплĕн туса лартсан, хуншăн ху хуť Амерĕкри ҫынсемпе йумахла. Иалта киревсĕр, усал ĕҫсем тусан, пĕр минут хушшинҫе Мускава пĕлтерме пулаť. Тĕрлĕрен контсерт-йурăсене пин ҫухрăмран итлеме пулаť. Хăвăрах шухăшлăрха, ун пек йапала пулма пултарати? Пралуксăрах вĕт. Пурнăҫра пулма ҫук йапала вăл! Прем тĕлĕнмелле хăват!

—Ҫăн, ҫăнахах тĕлĕнмелле!—терĕҫ хуйхăрса йал хĕрарăмĕсем.

— Пăх халĕ! Пралуксăрах пин ҫухрăма илтĕнет тетĕн? Маттур йуплешке!—терĕҫ тĕлĕнсе мушиксем.

— Мĕн каламалли пур ĕнтĕ ун ҫинҫен, терĕ тийаккăн хăй сăмахне пĕтерсе.—Рати ҫинҫен есĕр пĕрпĕрине тĕплĕрех каласса пăхăрха. Калама ҫук тĕлĕнмелле усал йапала!

Мушиксем тĕлĕнсе ĕнсесене хыҫса лараҫҫĕ, тийаккăн тата малалла йурттарҫĕ.

---

Тепĕр икĕ кунтан, тийаккăн ҫӳреҫе умĕнҫен хăйĕн тусĕ, йалти усламҫă Ҫитăркка иртсе кайнине курҫĕ.

— Ей, кум!—терĕ ҫĕнсе илсе: мĕн есĕ пуҫна ҫакса пыратăн? Милитси пайĕнҫен мар пулĕҫке?

— Халăх ҫинҫе пултăм,—терĕ хуйхăрса Ҫитăркка: мушиксем ратио тусĕсен ушкăнне орканисатсилесе плепарат ҫырăнса илес, тесе постановлени йышăнҫĕҫ.

— Мĕнле апла?—кăшкăрса илҫĕ тийакккăн тĕлĕннипе: ак! сисрĕ ман ҫĕре! Кам вĕсене ун ҫинҫен ăнлантарса панăши?

— Пĕлми пулатăн тата!—терĕ куҫне хĕстерсе усламҫă: есĕ ăна, есĕ, кам пултăр тата! Тийаккăн пирĕн хăлхасене пĕтĕмпех ратипе тултарса лартрĕ, теҫҫĕ мушиксем. Тийаккăн пулман пулсан, епĕр хамăр тĕттĕмлĕхпе ун ҫинҫен ăнлас ҫук, спаҫҫипă ăна, теҫҫĕ.

Тийаккăн икĕ аллипе ҫӳҫне пăҫăртаса тытрĕ те, пӳртелле вĕҫтерсе кĕрсе тарҫĕ.

КАРППĂВ Н. А.

# Иккасси шкулĕнҫе.

Иккасси шкулĕнҫе (Шупашкар районĕ), сивĕ пирки, пакри шыв шăнса ларнă, аҫасем 3 кун хушши вĕренеймерĕç. Х.—Х.




ХРЕСҪЕН. Уҫиттĕл, есĕ вĕреннĕ çын, пактери тени мĕн тени пулаť ара?

УҪИТТĔЛ (çилленсе). Пактери тени вăл... пирĕн шкулти пакра халĕ шыв шăнса ларнă. Çавă пулаť вăл.

## Автанпа ҫăхă.

Пўрт хыçăнҫе, тусан çинҫе,
Çынсем иртсе çўрен çĕрте
Шур ҫăхăпа ҫăпар автан
Никамран та вăтанманран
Пĕрле лараççĕ.

Тусан çинҫе тапкаланса,
Шăтăк туса алталанса,
Кĕлеткисем курăнмиҫҫен,
Кăмăлĕсем шăп тулиҫҫен
Кĕрсе выртаççĕ.

Ылтăн пуçлă ҫăпар автан
(Те пуçĕнҫе шухăш пуртан)
Ҫăхă çине куç айĕпе
Пăхса илҫĕ хăй майĕпе
Шухăш вăрлама.

Ҫăххи ăва асăрхаса,
Тусан çинҫен васка, васка
Тухрĕ тула хăлтăланса,
Кĕлеткине йўле йарса
Иурă йурлама.

Автан çине пăхса илҫĕ,
Куçĕпеле вăрттăн ҫĕнҫĕ,
Пыр шăтăкне хыра, хыра
Шăрантарҫĕ савнă йурра:
Ка-ка-ка-ка-ка!

Автанĕ те хĕпĕртесе,
Сухаҫсене ҫĕтрентерсе,
Тухрĕ тула йурламашкăн,
Шурă ҫăхха пулăшмашкăн:
Кикирек-ку-у!

Кăмăл çине кăмăл турĕç,
Кĕлеткене çăмăллатрĕç,
Шур ҫăхăпа ҫăпар автан
Иаҫĕç йурра пĕтĕм ҫунтан:
Ка-ка-ка! Кикирек-ку-у! Ка-к! Кик!

Иурла, йурла пурăнсан та,
Тусан çинҫе йăвансан та,
Ҫăхă лайăх—сута памасť,
Хăй савнине намăс тумасť—
Ыйтмасť аллимент.

Ç. Шăпҫăк.

# Решим.

Пӗлмесӗр тунӑ токлатран усси ҫук.

Вырӑсла тумланнӑ пӗр ҫын йалсовет кӗнҫелерне кӗрсе тӑҫӗ. Паллах, ку хулара пурнакан ҫын. Йалхушшине токлат тума килнӗ пуҫ.

— Претҫетаттӗл ҫелсоветта есӗ пулатна?

— Епӗ.

— Ну, ҫасрах халӑха схутка пухтар!

— Йурӗ, терӗ йалсовет.

Халӑх пухха ҫасах пухӑнҫӗ. Тӑнлӑрах мушиксем те ҫылай пулас.

Хуларан килни халӑх хушшинелле кӗрсе калаҫкалама та пуҫларӗ.

— Йулташсем, епӗ сирӗн пата решим ҫинҫен калама килнӗ. Пирвайах калас пулат,—халӗ пирӗн решим еккономи тенӗ йапала пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрат. Сахал укҫа-тенке сайа йарса вумай илме тӑрӑшас пулат.

Тата ҫылай каларӗ. Йулашкинҫен ыйтусем пуҫланса кайрӗҫ.

— Йулташ! есӗ калас парха, пирӗн хресҫен хуҫайствинҫе решим мӗнле тӗлӗшпе тумалла?

— Сирӗн хуҫайствӑрине каласа пама епӗ акроном, терӗним?

Ну ҫапах та, хам пӗлнине кӗскен каласа парам.

Сирӗн хуҫайствӑра ҫапла тума мошнӑ. Есӗр хаҫ ӗне—выҫӑхсене питӗ нумай апат парса сайа йартаратӑр. Ман шутпа тирпейлӗ парсан, сахалпах ҫитмелле.

Кӑна илтсен пирӗн Картти Ваҫли килнелле питӗ васкаса хӗпӗртесе ҫуптарҫӗ. Хупса лартрӗ ӗнине картана.

— Тӑр пӑҫланса! Апат памасан та пурӑнма пултарат. Кӑҫал апат нумайах марха. Ҫав мӗнле тумаллине хуларисем пӗлесҫех пулӗ вӗсем.

Никама та шарламарӗ. Пӗр кун апат памарӗ, икӗ кун, виҫӗ кун, тӑватӑ кун. Пилӗкӗмӗш кунне картана кӗрсе пӑхат те, ӗни кайса ӳкнине курах кайат.

— Ха-а-ас! Ҫорт! Марш шыв патне! Ӗни тӑраймас.

Краву-у-ул! Решим пӗтерҫӗ! Кӳрӗшсем ҫупса ҫитрӗҫ.

— Мӗн турӑн ӗнене? Пӗтрӗмӗр пӗтрӗмӗр,тесе йӗреҫҫӗ.

— Шуйттан! Тавар Михалине ҫасрах кайса калаха. Вилсе кайаҫҫен пусса пӑрахас.

Арӑмӗ хӑвӑртрах ҫӗнсе килҫӗ.

— Ара, Михали, пӗтрӗмӗр! Решим турӗ ҫакна, шуйттан!

Ӗнене пусса пӑрахса тирне ҫасах сӗвсе илҫӗҫ.

Каҫхине решим апатти пӗҫерсе ҫирӗҫ.

Кӑртти Ваҫли ҫисе тӑрансан ҫапла кӗл-туса выртса ҫывӑрҫӗ:

— Ей, атте турӑ, сана тархаслатӑп! Мана пулӑшса пырсам. Решим ҫинҫен каласа ҫӳрекенсене вӗлерсе пӗтерех. Ей, турӑ ҫырлах! Пракух.

---

## Копператтӑр.

(Ревиҫи умӗн).

Ир пулат те каҫ пулат,
Вахӑт пӗрмай ҫывхарат,—
Манӑн отҫот тумалла,—
Анҫах тепле суймалла.
Копператтив укҫипе
Ҫӗнӗ кӗлет ларттартӑм.
Сахал мар ун тупӑшне
Хама ваҫҫи хӑвартӑм.
Путех отҫот хыҫӗнҫен
Вӗҫне ҫитсе тухат пуҫ,
Шупашкар шур ҫуртӗнҫе
Кирпӗҫ сума тивет пуҫ.

Иехвин.

## Ӗҫсем аван пыраҫҫӗ.

— Пирӗн вуламалли ҫурта йункун —пасар кун пит нумай халӑх ҫӳрет.

— Хаҫатсем вулама-и?

— Ҫӗлӗм туртма. Хӑшӗ-пӗри ӑшӑнса кайат тата.

Сармантей.

## Ҫӗнелнӗ йумӑҫ.

— Йумӑҫ пӑхма мӗн ҫул?

— 3 тенкӗ.

— Ма йӳнӗ?

— Йӳнетмелли саккун тухнӑранпа йӳнетмелле пулҫӗ. Ҫӑтлӑх.

# Оппоҫитси Раштавра.

Раштав каҫ тӗшмӗшлӗ ҭӑвашсем килйышри ҫынсем йаҭӗпе улӑм ҫўпписем лартса тухаҫҫӗ. Вара ирхине пӑхаҫҫӗ,—камӑн хуҫӑлнӑ—ҫав вилет ҫав ҫул, теҫҫӗ.



ГРОТСКИ. Манӑн улӑм пӗрҭи хуҫӑлнӑ. Манӑн ӗҫсем ҭӑн-ҭӑнах вилессе пуҭ ку.

# Шыракан тупатех.

Емек-касси йалĕнҫе (Тутаркас районĕ) пулăшкома суйлама 12 кăнтитат ҫырнă, кăнтитатсенҫен нихăшĕ те пулăш·омă кĕресшĕн пулман, вара аран пĕр ĕҫме йуратакан ҫынна суйласа хунă, тет Хурҫă. Апла пулсан, епĕ ҫак фелйеттонра каланă ĕҫсем те пулма пултараҫҫĕ. (Автăр).

Пулăшкомăн ҫулталăк хушшинҫи нимĕн те туман ĕҫĕсем ҫинҫен отҫот итленĕ хыҫҫăн, пулăшком ҫленĕсене вăрҫса илсен, пуху ҫĕнĕрен пулăшком суйлас ыйту ҫине шуса лараť.

— Кама суйлас, тет претҫетаттĕлĕ (пуху претҫетаттĕлĕ) хайĕн усăннă пуҫне ҫавса тунипе тĕкĕлесе.

Шăп пулҫĕ халăх. Пĕрене хушшинҫе ҫарусăр таракансем хăшăлтатаҫҫĕ. Кăмака шăтăкĕнҫе шăрҫăк ҫĕриклетет халăх шăп пулнăшăн савăннипе.

— Халăх, терĕ претҫетаттĕл, — такама та пулсан ҫав пулăшкома суйласах пулаť.

— Хăта, хăвах пулатăн пуҫ пулăшком претҫетаттĕлĕ. Сансăрăн пуҫне кам пултарĕ унта? Ҫăмăл ĕҫ мар ĕнтĕ вăл, хамăрах пĕлетпĕр, терĕ малта тăракансенҫен пĕри.

— Суйлас, суйлас!— кĕрлесе йаҫĕ халăх.

Претҫетаттĕл йăпăр-йапăр ура ҫине тăҫĕ:

— Хăвăр пулăр! Ĕҫсĕр антраса ҫӳреме епĕ хусах ҫын мар, терĕ те, аллинҫи ҫĕлĕкне тураман пуҫĕ ҫине лаҫ пусса лартрĕ.

— Йалта йатлă ҫын пулатăн, вĕт!

— Йалта йатлă ҫын пулса... халĕ мана арăм кăна йатлаҫаť, ун ҫухне вара пĕтĕм йал, ватти-вĕтти мĕнĕпех, йатлĕ. Тфу! Апла пулсан... тухса кайатăп кунтан. Хăвăрах суйлăр!

Вăрвар алăк патнелле утрĕ хайхи йашланса. Ҫывăхрарах тăракан ҫынсем ăна кĕрĕк аркинҫен йарса тытрĕҫ. А лешĕ туртăнаť, алăк сулли урлă ура йарса пусасшăн тăрмашаť. Халăх-халăхах, ҫарҫĕ-ҫарҫех претҫетаттĕле, пулăшком пулма урăх ҫын тупса пама пулҫĕ.

— Кĕркурийе суйлас!

— Епĕ платник. Килте пулмастăп. Ан аппаланăр. Мансăр та тупăнĕ. Тупата ĕҫлеместĕп.

— Ваҫлийе!

— Упрама!

Нахăшĕ те ĕҫлесшĕн мар.

Претҫетаттĕл ҫырма ларҫĕ. Каллех халăх лăпланҫĕ.

— Вуник кăнтитат тупрăм. Вуласа параси? —терĕ хайхи пулăшком пуласран хăтăлса йулнă претҫетаттĕл.

— Вула, вула! Суйлас!—кĕрлет халăх.

— Иванов Ваҫҫили!..

— Епĕ-и? Епĕ клуххой, хăлхасăр. Арăм вăрҫни те хăш ҫухне хăлхана кĕмест. Унта ĕҫлейместĕп.

— Петров Иван!..

— Трахомлă епĕ. Пуҫнитса ҫӳремелле. Унта кĕрсен пурне те сире траххом йертсе йаратăп.

— Мăнсухалăв Мĕкĕти!

— Епĕ красноармейтсă ҫемйи.

— Хветоттăв Хветĕр!

— Манăн уйăрлса тухмалла.

— Йарапайĕв Йакур!

— Хăť ҫăрапа питĕрсе илĕр,—ĕҫлеместĕп.

— Леонтйĕв!

— Епĕ киле кĕнĕ ҫын. Хунеме карҫăк ĕҫлеттерес ҫук.

— Петров Ваҫҫили!

— Кирлĕ мар мана. Пите те хĕретместĕп.

— Упрамăв Иăван!

— Ал пусма пĕлместĕп.

— Ал пусма пĕлмесен, хĕрес лартма пĕлетĕн.

— Комуниссем хĕресе йуратмаҫҫĕ.

— Пракух!

— Йа пйанствоваť лӳплӳ,—вҫо пропйу!

— Кĕҫтенкки!

— Арăм ҫирлĕ манăн.

— Рышепоротăв!

— Тепĕр уйăхран услам тума тытăнатăп.

— Кăрликкăв Иăван!

— Иумăҫ мана тепĕр уйăхран вилетĕн, терĕ.

Нихăшĕ те ĕҫлесшĕн мар.

— Совет хĕрарăмсене суйлама хушаť. Анаткасри Путене карҫăка суйлас.

— Пураť. Ҫĕнсе килĕр ăна кунта.

— Ей, аса илҫӗҫ кирлӗ мара! Пӗлтӗртенпех вӑл ҫава шӑтӑкӗнҫе выртаҫ. Вилсе таксанах тӑпра пулнӑскер пулӑшкомра ӗҫлеймест ӗнтӗ вӑл.

— Ҭфу! Ку карҫӑксемпе... вилессе те вӑхӑтра вилмеҫҫӗ,—хӗрарӑм темерӗн.

— Несоснани ҫав.

— Вилӗ тӑпри ҫӑмӑл пултӑр!

— Кама суйлӑпӑрха апла?

— Н-нта!..

— Ех, шухӑшласа кӑлартӑм, йулташсем!

— Шухӑшласа кӑлартӑн пулсан, ҫасрах кала тата!

— Килӗрен-киле ҫӳрес!

— Ҫӳрес, ҫӳрес! Пур ҫӗрте те шырас!

— Айтӑр ман хыҫҫӑн!

— Кайар!

— Сапаланса кайар! Никама та тӗпҫемесӗр йарар мар.

— Ей, муҫей! Килха кунтарах! Пулӑшком пулас килмести санӑн?

— Воспоти-турӑ! Таса ҫыннах ӗҫлӗ ҫынна кӗртес, теттӗри?

— Сӑх-сӑх таса ҫын тесе.

— Таса ҫын пулмасан ҫакӑнтах сухалӑм ҫунса кайтӑр. Ӗҫлеместӗп унта, тупата!

— Иураҫ. Кайах!

— Тӑхлаҫӑ, тӑхлаҫӑ! Килха кунта! Санӑн пулӑшком претҫетаттӗлӗ пулас шухӑш пулмалла. Пӑхха ман куҫран... тӳрипе кала!

— Мӗн тӑрӑхлаттӑр ҫипер ҫынна?.. Ара, хӑвӑр йалсем пулӗ терӗ пуҫ мана. Еп инҫетрисем.

— Инҫетри те йураҫ, пире хӗрарӑм пултӑр. Хӗрарӑмсене ӗҫлӗ ҫынна кӗртме хушаҫҫӗ хаҫхи саманара.

— Тур хупламанскерсем! Ара епӗ Шупашкара кайатӑп... пуҫнитсана... аҫампа.

— А-ҫу-па?! А-аҫу пулӑшкома суйланас темести?

— Ара, уйӑх ҫурӑри аҫа ӑҫтан унта ӗҫлеме пултартӑр. Каласма та пӗлмест вӑл. Иӳтеме пуҫлани мӗн есӗр, хӑтасем?

— Апла пулсан ҫава тӗпне ҫитиҫҫенех кай! Сан пек ҫапкаланҫӑксем кирлӗ мар пире.

— Е-ей-й! Ей, ӗмӗлке! Ан кайха! Килха кунта! Есӗ... мӗн... леш... пулӑшкома кӗместӗни?

— Ме-ме-мек!

— Ҭфу, шуйттан! Каҫака таки мӗн... ҫуҫ пулӑшкома суйланаҫҫӗ. Хыпаланнипе тем те туса хурӑн.

— Иртсе кайах, краштанин каҫака таки! Сава, парттире тӑман каҫака такине, пулӑшкома суйлас тенӗшӗн тархасшӑн ан ҫиллен. Касар!

— Ме-ме-ме!

. . . . . . . . . . . . . . . . . .

. . . . . . . . . . . . . . . . . .

— Ну, мӗнле? Пурне те тӗрӗслесе тухрӑри?

— Тухрӑмӑр.

— Тупрӑри?

— Ҫук.

— Витесенҫе шырарӑри?

— Шырарӑмӑр.

— Арпа ӳплисенҫе пултӑри?

— Пултӑмӑр.

— Тӗп сакайӗсене кӗрсе тухрӑри?

— Пӑхрӑмӑр. Ҫук!

— А, тӑхтӑрха! Навус куписене сапаласа пӑхма маннӑ пуҫ есӗр?..

— Ав-ав-ав! Пӗр ҫынна йатса килеҫҫӗ. Пулас пулӑшком претҫетаттӗлне тупнӑ. Ур-ра!

— Ей, хӑвӑртрах йатса килӗр!

— Ҫиҫҫас!

— Претҫетаттӗл пулма пулнӑ ҫынна тупрӑмӑр. Навус купи кутӗнҫе тупӑнҫӗ. Ӗҫсе тултарнӑ та, сысна пек сапӑлса выртнӑ навус купи кугне. Пулӑшкома кӗресрен откас мар вӑл.

— Суйлас, суйлас! Ҫырӑр пртакулне... урӑлаҫҫен.

Пурте хавас. Кӑмӑл тулса ҫитнипе хӑшӗн-хӑшӗн куҫҫӳлӗсем шӑпӑр-шӑпӑр йухса анаҫҫӗ тарланӑ пиҫӗсем ҫийӗн.

ИАВАН-МУҪИ.

## Волокиттӑсӑр.

Пӗр хресҫен пуҫнитсӑна кӗрет. Кӗрсенех ӑна тухтӑр хывӑнма хушаҫ.

— Хывӑн, хывӑн: кунта хывӑнас пулаҫ!

— Мана, тухтӑр, мӗн...

— Хывӑн, хӑвӑртрах, каланӑ сана!

— Тупата ман, мӗн...

— Хывӑн тенӗ, мур илештӗ!

Хресҫен хывӑнаҫ.—Кала, ӗнтӗ, мӗн ыратаҫ?—Епӗ тӑватӑ лав вутӑ илсе килтӗм пулнитсӑ ваҫҫи. Уншӑн укҫа илмеллеҫҫӗ те...

У.—Т.



## Малалла кайакан копператтив.

Мал йенелле пăхса ларакан копператтива пĕр иккеленмесĕрех малалла кайакан копператтив теме пулат̆.

Пани-касси (Шупашкар районĕ) кивçен паракан йулташлăхĕ çулталăк хушшинҭе лап 3 пус тупăш курнă. Копператси пире сотсиалисăм çулĕпе йертсе кайтăр тесе, çав 3 пус тупăша копператтивăн тĕп кăпиталне вăйлатнă çĕре йамалла турăмăр, тет Йол-ка.

Вăл 3 пус тупăша ҭленсене салатмаллаҭҭĕ сирĕн. Миçешер тенкĕ тивĕҭҭĕ?

## Йăвăр çын.

Ĕлĕк пĕри купăста пахҭине хуралама каҭакана тытнă, тет те, леш, вара пахҭара пĕр купăста та хăварман, тет,—тӳни мĕнĕпех çисе йанă, тет.

Анат-Карапашри Акатейĕв Ивана Сотниккăв леçниҭĕствинҭи вăрмана хурал тăма хушнă. Акатейĕв лайăх хуралçă пулас тесе, 5-шер—8-шар лавсемпе вăрман турттарат̆ вăрттăн, тет Кисеп.

Турттартăр! Епĕр те Акатейĕв айăпне турттартăмăр та, турттарма кире пуканĕсем çитеймерĕç. Аслă сутăн пысăк пукансем пулаканҭĕ. Турттарса пăхҭăр унта!

## „Аслă Виктăр“.

Мăлатук Петĕрĕ çырат̆:

Шурҭа йалĕнҭе (Шупашкар районĕ) Виктăр Тимофейевиҭ йатлă çын вулĕçтăвком преçетаттĕлĕнҭе тăрса 6 пин тенке йахăн халăх укçине пĕтерҭĕ. Халĕ ăна вырăнсăр хăварҭĕç те, халăх хушшинҭе: вăрçă пулат̆не пĕлсе вулăсри ĕçрен тухрăм, тесе çӳрет, тет.

Вăрçă пулассине пĕлсе етем хисепĕнҭен те тух есĕ, Виктăр Тимофейҭă! Етем хисепĕнҭен такçанах тухнă та есĕ, анҭах ун çинҭен пĕлтерекен хут çукçке санăн. Парас пулĕ сана вăл хута та.

## Сăвапла акĕнт.

Пупăн ăсĕ пуçран пуçласа кăвапа патне çитиҭҭен, теççĕ. Иакашур çырат̆:

2-мĕш Хурамалти (Канаш районĕ) кивçен паракан йулташлăх правленийĕ Аҭҭа ҭиркӳвĕн пупне Кирил Танилăва акĕнта илнĕ. Лешĕ, йулташлăх хӳттинҭе паттентсăрах ҭăпта çаптарат̆, тет. Пупне паттент илтермесĕр акĕнта кĕртни килĕшӳллĕ йапала мар, правлени ҭленĕсене, паттент илтермесĕрех, пупа кĕртме йурат̆ вара.

## Рай пуçлăхĕ.

Кĕттермесĕр укçа паракан уҭрештени шырас пулсан, Канашри страхкасса ан пырăр. Тупата унта тупаймăр. Ак çыраççĕ:

Канашри райстрахкассă укçа илме пыракансене кашнинех: ыран килĕр, тесе йарат̆. Çавăн пек, ыран килĕр тесе, 3 уйăх кĕттернĕ укçа илме пынă инвалитсене. «Капкăн», мĕн калăн çак райстрахкассă çинҭен, тет Куракан.

Райстрахкассă пуçлăхĕ хăйне хăй рай пуçлăхĕ шутне хурат̆ сирĕн. Кĕртес ăна çук рай пуçлăхне, райстрахкассăран кăларма та йурат̆ вара.

## Тăлăх шкул.

Улăм-пĕрҭи çырат̆:

Анатри-йалта (Çĕрпӳ районĕ) шкул вутти пĕтсе çитнипе аҭасем ик ерне хушши шкула кайаймарĕç. Икĕ ернерен уҭиттĕл аҭасене пухса: камăн вĕренес килет, харпăр-хăй вуттипе вĕренĕр, терĕ. Çавна кура мĕн пур пек аҭи кашни кун пĕрер кĕлте улăм илсе пыма пуçларĕç шкул кăмакине хутма. Халĕ ĕнтĕ сивĕ мар, пиçсе те кайăн, тет.

— Ăçта кайан, аҭам?

— Хут вĕренме.

— Кĕлтипе мĕн тăван?

— Шкул кăмакине хутатпăр.
— Кам пăхаĭ сирĕн шкула?
— Никам та пăхмасĭ, песприсорнăйсем епĕр. Шкулĕ те пирĕн песприсорнăй.

### Ăçташи вăл?

Пурнан ĕмĕрте темĕн те курăн.

Акă Ţоţи-кассинţех (Шуп районĕ) хресţенсем пулăшкомăн ревиçи комисçине çухатнă. Проттоколĕ те çук. Хресţенсем: ахалех иртерсе йарас, никама та пĕлтерес мар, теççĕ. Анţах ун пек пулмарĕ—«Капкăн» сисрĕ.

Вĕсен пулăшкомĕ мĕнлешн? Ана та çухалаţţен паллă туса йамалла марши?

### Мăн-Хăмăрккара.

— Ăçта çакăнта ţиркÿ совеţĕн коллеки ţленĕ Сантомирăв Çеркей Фетăрţă?
— Тем ĕçке... пĕлместĕп епĕ. Ун йышши аслă наţалнĕк та пирĕн йалта пур пулиха.
— Ек-кейа, айван аţа! Ара мĕнле вăл çук пултăрха—пуррине хам пĕлетĕп пулаĭ те...
— Çук пирĕн йалта ун йышши мăн наţаљнĕк!
— Ей-ай, айван! Вăл, вĕт, Мăн-Хăмаркасемех,—йалсовет ţленĕнţе те тăраĭ вĕтха вăл? Урпаш.

### Кăлпасси татки.

Пĕри «Капкăн» ретаксине кăлпасси татки йанă çырупа. Кăлпассине хытăрах пăхрăмăр та, паранкă йарса тунă, хĕвелçамĕшĕ те пур кăлпасси ăшĕнţе. Ăна Шупашкарти „Пишţевик“ лавккинţен илтĕм, тет кăлпассине йараканни.

Кăлпассире паранкă тухнăшăн кĕвĕçеттĕр. «Пишţевик» кооператтивĕ ţленĕсен пусĕнţе арпа тухаĭ те, анţах пуç хуçисем кĕвĕçмеççĕ.

### Сутра.

— Краштанин Çитăрăв. есĕ çитсăсем вăрланăшăн айăпланатăн. Çвитеттĕлсем пури санăн?
— Çук, епĕ çвитеттĕлпе вăрламастăп та. Мамăк.

### Пултараççĕ.



— Ман çĕршĕн налок ţакса килţĕ, Иемелен куман та çавах ţакнă.
— Мĕнле апла? Сирĕн çĕрсем çынсенпе танахçке!
— Пирĕн çĕрсем тара илнисем вĕт. Епĕр инструкси çинţе вуланăţţĕ, тара илнĕ çĕрпе усă курнăшăн 15 проţţăн налок ţакаĭ тенине. Вара епĕ хам çĕрсене пĕтĕмпех Иемелен кумана тара патăм, унăн çĕрĕсене хам тара илтĕм. Çавăнпа ţакрĕ.

У.—Т.

### Хăратех.

— Есĕ, Иван Ваççилţă, ревиçирен хăратăни?
— Хăрамасăр. Ревиçи тунă хыççăн çунталăкĕпех хутсене йĕркелесе çитерейместĕн вара.

### Иÿнетнĕ.

— Ăçтан есĕр кооператтивра тавара йÿнетмеççĕ тесе калама пултараттăр? Ак сăмахран, виçĕмçул çак пулла 20 пуса сутнăţţĕ. Халĕ те çавнах епĕр 15 пусах паратпăр. Виçĕ çул хушшинţе типсе те хухмаллăх пулнă вĕт. Çапах йÿне паратпăр. У.—Т.




Сывă-и, йулташсем, савнă тăвансем!

Иртĕр кунтарах, ларăр çăтăрах. Урăрсене ҫăсăр, куçăрсене уçăр. Хăлхапа итлĕр (мана ан витлĕр!) Сăмах пуплĕпĕр, йумах йуплĕпĕр. Иумахрисене йĕппе йĕплĕпĕр!

Куславкка районĕ—Кукеве йалĕ. Комсомол йаҫейкки илнĕ çĕнĕ ҫын. Темшĕн тарăхса, хăй ĕçне пăрахса, йалсовет ĕçне вигнĕ хăй çине. Моҫалов хуçана (çывăх пуçана!) ĕнентерӳ панă (кашкăра маннă!). Арман хуçинне, пурлăх пуррине, çук тесе çырнă (катăк пыл çинĕ!). Моҫалов хĕрĕ, çӳреме йĕрĕ, ĕнентерӳ илнĕ, вĕренме кĕнĕ. Çамрăксен шкулĕнҫе, хаҫ те вĕренет, çтипенти укçине хĕпĕртесех хĕртет. Ĕтемĕн пырĕ темĕн çитерĕ, пуйанăн мулĕ темĕн тутарĕ. Хаҫ ĕçне тунă, мĕн кирли пулнă, çекреттар аллине—йĕплесси йулнă.

Ку йумах пĕтрĕ, ак тепри тухрĕ:

Çĕрпӳ хули—темте пĕр тулли. Мĕн кирлĕ—çав пур (курмасăр ан сур!). Расумăв хуçа çӳле тытнă пуçа: уçнă столовой, ой-ой-ой! Питĕ тĕреклĕ, пăхма та илемлĕ. Мĕн тесен мĕн çук, пăхса тăнă ҫух: хăрăк ҫашăксем, çуман кашăксем, вĕретмен йашка (çиме пит йашка!).

Кĕçĕн Иелҫĕк (çырмана ан сик!) Аслă йал Шăхаҫ—ҫатлă мĕн ахаҫ! Кĕçĕн копператтив ĕçлет çав—ан тив! Йалтах çĕн йĕрке (пырса ан тирке!). Кĕременке пукаҫ—тăваткаллă супăҫ, çавăнпа ҫикеççĕ, пурнăçа виçеççĕ. Намăссăр ĕçлет, алтăрпа ҫикет Хумма Микули (ех, йал кулли!)

Тутарла шкулĕ—Çĕрпӳ районĕ, картуссăр ларать, мĕскĕнĕн пăхать. Çиҫĕ çул ĕлĕк пурҫҫĕ ун çĕлĕк, çавра çил сĕвнĕ (хаҫ ĕнтĕ шӳнĕ!). Вар-хырăм аннă, çамрăклăх тарнă, ӳт кăвакарнă, пурте ăна маннă. Ҫĕрисем çĕрнĕ—манкаллă сурать, куçĕсем хĕрлĕ—куççулĕ йухать. Кунĕн те çĕрĕн пулăшу ыйтать; вилмесĕр-ҫĕррĕн тупăка пăхать. Парасҫĕ пулăшу. Ей, ĕçтăвком, сан мĕнле шухăшу?!

Çĕрпел Тупани (телейĕ тур пани?) ырлăхшăн çуннă, кирлĕ ĕç тунă. Çĕнĕ шкула вирлĕ сăн пама, кантăксем лартнă, рамăсем çапнă. Икĕ çул иртнĕ укçине илмен, хуҫĕсем çĕгнĕ пурнăçа кĕмен.

Каврил Тупани, телейу тур пани?!

ÇĔПРИТУН ПАПАЙ.




## Ашшĕ майлă.

— Ăçта ҫупан, Саҥккă? Рыҫакне ма йатрăн?

— Атте пек çынсен кантăкĕсене ватма кайатăп.

— Апла сана тытсан тĕрмене йараççĕ.

— Аттене йаманçке. Мана та йамаççĕ. Х.—Х.

## Иӳтенĕ çын.

— Пĕре епĕ теҫанккă илме карăм та, малтан пĕр сĕтел патне пытăм. Вăл йунашари патне кăтартрĕ. Унта пытăм, теприн патне йаҫĕ, вăл та хăвалать. Вара каллех малтанхи патне пытăм та, ĕç тăваканĕ çавах пулнă.

— Çавах пулни? Ара вăл çын йутеме пуçланă пуҫ... Шарик.

# Ах, вăл савнийа!.

Йаш пирки еп (ех мăнтарăн!)
Мĕскер курман-ши!?
Йăлтах пĕлсен кулсах йарăн
Итле, кукамиː
Пĕре каҫпа, кĕркунне вăл,
Тухрăм урама.
Хам пуҫăмра пысăк тăвăл
Савни асăмра!
Йăпăр-йапăр лапăстатрăм
Анат урама,
Хам хашкатăп,—йăлт тарларăм
Утап хыпăнса.
Каҫ пит тĕттĕм ним курнмасђĕ.
Пырап танкăшса.
Ман тĕллĕнех таҫтан тухрĕ
Инкек йăтăнса.
Савнă тусăм патне ҫитес
Тенĕ вăхăтра
Сисмен хутран йанках сикрĕм
Тарăн шăтăка.
Катăршнăй ку шăтăк пулман,
Пулнă тарăн ҫăл!
Инкек пулђĕ кĕтӳпеле
Шăнтат̆ ҫăлти шыв.
Мăй таранах шывра тăрап.
Хам хăрап, ђĕтреп,
Кăшкăрас теп,—вăтанатăп,
Ухмах тейĕҫ, теп.
Ҫур сехет пек тăтăм пулĕ.
Пĕри ђалкăшса,
Пыђĕ, йăслат̆ витри,
Ҫăла шыв ăсма.
Хĕпĕртерĕм ђут кулаттăм
Ҫыртрăм шăлсене,
Ҫын витринђен йатăм тытрăм
Ђасрах пикенсе.
Ма пит йăвăр..? Ђорт витри ку,
Тет ҫын ҫилленсе.
Еп тухатăп шăннипеле
Тăр-тăр! ђĕтресе.
Ҫăл анине ҫитес ђухне,
Ман ҫын хăраса,
Йăпăр-йапăр хăй витрине
Иађĕ ҫăлалла.
Кутăн пуҫăн ђăмса антăм
Каллех еп ҫăла,
Ҫăл тĕпĕнђе ыраттартăм
Сылтăм алăма.
Сехет ҫурă ҫитнĕ ҫĕре
Каллех хыпăнса,
Утса ҫитрĕ ман ҫăл умне
Тепри шыв ăсма.
Телейĕ ку савни пулнă
Ҫинҫен ĕсĕрет.

Сасси уҫă пит хăватлă
Хытах илтĕнет.
Ђатаймарăм, кулсах йатăм.
— Итле, Матрӳне!
Ăнсăртран еп ҫăла тăрнтăм
Кăлар ҫӳлелле.
— Ес шуйтан пуђ..? Еп таратăп,
Тейет ман савни,
Палламаст мур, хĕрхенмест те,
Ытă туртманни!
Кайран мана пĕлђĕ пулас
Иурĕ, терĕ те,
Тапкаланса мекĕрленсе
Кăларђĕ типпелле.
Каҫҫа кайса манран кулат̆
Хайхи ман савни.
Хăйпеле еп выђасшăн та
Выђаттармаст̆ мур!
— Ҫăла сикен, ватă сысна,
Сан пек кам, тет пур.
Лĕпĕстетрĕм вара епĕ
Хамăн килелле.
Вĕр-ҫĕн кĕрĕк ђустах пулђĕ
Ах, вăл савнине!
Тепре тата улах ђухне
Савнипе тытса,
Хĕрĕн ашшĕ йăлт пĕтерђĕ
Мана шаккаса.
Айаксенђен текех парат̆
Мана турђкапа.
Ман ыратат̆, ăна пăхмаст̆
Хĕнет хашкаса.
Сăмса тăрнђен турђкапала
Пĕрре ҫапрĕ те,
Ҫур сăмса ман талсах ӳкрĕ
Урай варнелле.
Сăмсам лайăх,—шăрш пĕлетђĕ
Пĕтрĕ, шеремет!
Хађ йăлтах мур ђăхăмланђĕ
Вуҫах шăрш пĕлмест.
Кунсăр пуҫне, йыт турташшĕ,
Ахађ телей ҫук,
Пурнкаласан савни турĕ
Икĕ ађа трук!
Укҫам ҫуккă, ђунăм кӳтрĕ.
Савни пĕтерет—
Уйăхсерен вуншар тенкĕ
Тӳлле алимент!

Аттай М.

# „Ђутă“.

(Усламçă каласа кăтартни).

Епĕ çӳресе курнă çын. Питĕрпе Мускава та çитсе çапăннă. Ђулхулан ђул урамĕсем те маншăн йутах мар. Хусан çинђен каламастăп та: унта, тĕл килсен, ернере çиђĕ кун та пурăнса пăхнă епĕ. Анђах кăçал çак, хамăр йалпа пĕрех шутланă Хусан хулинђех, Шăмат пасарĕ пек аван пĕлсе тăнă толђђокрах мана тĕлĕнмелле ĕç кăтартрĕç. Пуплесен халап, каласан суйă. Есĕр мана ĕненмĕр. Ĕненместĕр пулсан, Çĕн-Шĕвĕшри Кирук Мишшине шыраса тупса ыйтса пĕлме пултараттăр. Хăвăр çывăхри пасара кайса килме çеç ан ӳркенĕр. Мĕншĕн тесен çу вăхăтĕнђе ку тăрăхри пасарсем Мишшасăр сайра иртеççĕ.

Ĕç ак мĕнле пулђĕ. Карăмăр епĕр Мишшапа Хусана. Хусанта хăш ђухне йӳнĕ таварсем тĕл пулма пулаĭ. Шаравар, пиншак, шенел, кармуђ, накиткка,—епĕр май килсен ним те тирксе тăмастпăр. Ђăваш хушшинђе пурте услам параççĕ. Çавăнпа, тӳрех калап, çавнашкал йапаласем илес тесе Хусана карăмăр. Укçасем пур пирĕн. Ман 250 тенкĕ, Мишшан та çĕр ытларахђђĕ. Çитрĕмĕр те, хĕвел тухнă анђах, толђђокра уткаласа çӳретпĕр. Пасарĕ епĕр пырсан çеç пуçланма тытăтăнђĕ. Ирех çавах халăх çук, çӳреме аван. Йапаласем илме васкамасан та йурĕха, тесе пасар вĕçнелле утрăмăр. Аçта мĕн пур-çукка пăхкаласа уташăр. Пирĕн умра пĕр йанкăс пыраĭ. Шараварĕ лайăх, пиншакĕ лайăх—пур те лайăх. Мишшапа иккĕн тӳрех ун çинђине 100 тенкĕлĕх пахаларăмăр. Çак çаплах пирĕн умра утаĭ, хăй пĕртте кайалла пăхмасĭ. Çапла пыраканскер, пасар вĕçне тухсан, пиншак кăсйинђен курăнса пыракан шурă сăмса тутрине йăшт туртса кăларђĕ. Тутăр хыççăн хупхура йăлкăшакан укçа йенђĕкĕ лап тухса ӳкрĕ. Йанкăс ăна-кăна ним те туймарĕ. Утнă çĕртех сăмсине хыттăн йанратса тасатрĕ те, çаврăнса пăхмасăрах, йарапарђĕ хăйĕн çулĕпе. Çывăхра пирĕнсĕр никам та пулмарĕ. Ак, телей!

Çитрĕм те илсе ђикрĕм йенђĕке кăсйана.

— Çурмалла вара, асту!—хытараĭ мана Мишша.

— Йурĕ-ĕçке, айта-ха пĕр-пĕр кĕтессе,—тетĕп.

Çавăнтах пуш каткасем, арђасем купаланă. Çавсен хыçне карăмăр та уçса пăхрăмăр. 205 тенкĕ шăнăрт—20 ђервонтсă тата 5 тенкĕ. Ну, телей! Ђасрах пуçтартăм та ђикрĕм, уйăрма та хăрарăмăр çынсем курасран. Анђах, епĕр кĕтесрен тухрăмăр, пирĕн ума хайхи йанкăс пырса та тăђĕ.

— Вăт, йулташсем,—тет хăй вырăсла,—халĕ çак тĕлелле ман укçа тухса ӳкнĕ. Ман хыçра есĕр пек астурăм епĕ. Тупрăр пулсан парăр,—ахаљ тумăп сире, тет.

Мĕн тăвас? Тупман тесен те май килес çук, таçта темле кăмиссар пулĕ те тытса та хуптарĕ.

— Мĕн ђухлĕ сан укçу?—терĕм.

— 20 ђервонтсă, тата 5 тенкĕ.

— Ну, тупрăмăр ђанах,-терĕм,—пĕр ђервонтсине паран пуљ..?

— Йурĕ, йурĕ,—терĕ çак.

Кăларса патăм укçана. Шутласа пăхаĭ—19 ђервонтсă та 5 тенкĕ çеç. Ак, тамаша! Ну, есĕр ђервонтсине илнĕ тет. Ман çапах, илмен çинђех, ăйăплă пулас килмест. Тата тупнăшăн 10 тенкĕ илесех килет.

— Апла пулсан кăтарт хăвăн укçуна. Ман хам ђервонтсăсен нумĕрсене çырнă хут пур, акă пăх! Çакăнти нумĕр сан укçушĕнђе çук пулсан, санра мар айăп,—тесе кăкринђи кăсйинђен ђанах та нумĕрлĕ хут туртса кăларђĕ. Епĕ те хĕрсе карăм. Хамăн 250 тенкĕне туртса кăлартăм та (ман та, шеремет, ђервонтсăсемђђĕ!) кашни пĕрне уйăрса йанкăса паратăп. Вăл нумĕрлĕ хуђĕ çине пăхаĭ те, ман ђервонтсă çине пăхаĭ те:—Ку ман мар—ку тошă,—тесе мана кайалла тыттараĭ. Цурне те тытса пăхрĕ, хăйĕн нумĕрлине тупмарĕ. А епĕ хăранăђђĕ ун нумĕрлĕ хутĕнђен. Унтан: есĕ йулташна панă пуљ, терĕ. Мишшанне те тĕрĕслесшĕн.

— Çук, вăл алпа та тытса пăхман,—терĕм те ђарăнђĕ.

— Ну, темле пулнă, çылăхĕ çурмалла—ме сана 5 тенкĕ!—терĕ те

# Вăхăтра тухнă.



— Вăйлă çил-тăман тухрĕ. Никам та сопранирен токлат пĕтмесĕрех тухса кайас çукха.

тăрса утрĕ. Епĕ хам укçана пуçтарса ҫикрĕм те: ех, шуйттан, телей пулмарĕ!—тесе пасаралла Мишшапа утрăмăр. Мишша та тарăхнă. Пасара кĕтĕмĕр çеç, пĕр тутар пĕр купа накиткă сутса ларать. Тыткаласа пăхрăмăр,—лайăх. Хакĕ йӳнĕ. Тӳрех 50 накиткă калаçрăм 5-шер тенкĕпе. Мишша 25 калаçрĕ. Шутласа уйăрса хутăмăр. Ĕнтĕ укçа тӳллетпĕр. Епĕ хам йенҫĕкрен 250 тенкĕне мĕнле майласа ҫикнĕ çаплипех туртса кăлартăм та... ӳ-ӳ-ӳ... тутарса шăхăрса йаҫĕ ман тута хăй тĕлĕнех. Вăт, тĕленмелле йапала!.. Ман алăра кĕнеке пек касса пĕр майлă хунă хаçат хуҫĕ лап 25. Вăт, шуйтан йанкăсĕ мĕн туса карĕ вăл мана. Ман укçасене тытрĕ-паҫĕ, тытрĕ-паҫĕ те... А Мишшан ҫиперех... укçах. Ман та 5 тенкĕ йанкăс пани укçах... анҫах мĕн тăвас-ха ман унпа... Мишша накиткă илсе тавăрнҫĕ. Епĕ хуйхи-суйхипе 5 тенке ĕçсе йатăм та, киле Мишша шуҫĕ çинҫен çиткелерĕм. Кун хыççăн пĕтрĕ ĕнтĕ ман пурнăç—пĕтрĕ услам тумалли.

Çырса илнĕ Ниçен

---

Хĕрна хытă йуратнипе хăвăнтан уйăрас килмест пулсан, ăна усалтарах çынна каҫҫа пар,—кашни кунах ху патна ҫупа-ҫупа пырĕ.

# Манăн йулашки çыру.

Ну «Капкăн» ретакси! Хăй̆ вăрç, хăй̆ хĕне, йулашкинђен хăй̆ «Капкăнна» лартса хур ман çул çине,—кăçал «Капкăна» урăх çырмастăп. Çитĕ. Йулашкиçырăва çыратăп кăçал, урăх ан кĕт манран пĕр çыру та. Лайăхи, нађари —çапах çыркаласа тăтăм мĕн вăй çитнĕ таран.

«Капкăна» çырса тăма пуçлани, тĕрĕссипе каласан, хаçат-шуркалсене варлама пуçлани пĕр çул та çукха, анђах, сана пула, тĕрлĕрен елементсем тем тума сивĕ куçпа пăхма пуçларĕç.

Çавăн пек, пĕр Елементпа иртнĕ шăматкун мунђа пĕрле кĕтĕмĕр. Ку Елемент кунта иккенне пĕлнĕ пулсан, хамран кађака таки шăрши килнĕ пулсан та, çав мунђана пырса кĕмен пулăттăм, анђах, арăм: санран лаша шăрши кĕрет, кайах мунђана, терĕ те кайас, терĕм хам та.

Хăвах пĕлетĕн, Комунпай мунђине çарамасланса кĕретпĕр вĕтха. Епĕ, ырхансккер, йăпăр-йапăр çарамаслантӑм та, авăрсăр таспа шалалла кĕрсе карăм. Мана х и р ĕ ç хайхи Елемент тенĕскер милĕкпе çапăнакан пӳлĕмрен тухрĕ те, ман çумма пырсах пăрланса тăракан сивĕ шыва йухтарса илсе пуçĕ тăрăх йађĕ. Анђах хăйне пĕр тумлам та лектермесĕр, пĕтĕмпех ман çине, тин пырса кĕнĕ, тарламан çын çине йара пађĕ. Вăт, Капкăн хуçи! Сан çине çавăн пек сивĕ шыв тăксан есĕ мĕн калăн мунђара? Хире хирĕç хур пăтти? Çапла. Епĕ те çаплах турăм: авăрсăр таса сивĕ шыв тултартăм та, йара патăм хайхи Елемента: тавăртăм, терĕм хам ăшра. Ман Елемент, киленсе çеç кайнă:—тата йарха, спаççипă калăп, тет. Хăйĕнђен пăс тухса тăрай̆, шуйттанран.

Ку капла пулђĕ. Иртнĕ тунти кун ху хушнипе «Капкăн» вађђи апат-çимĕç шырама карăм. Хăвах пĕлетĕн, Капкăн хуçи, ун пек ђухне епĕ тĕлĕкре кантра йавнă пек çӳреме йуратмастăп, васкаса çӳретĕп. Майпен çӳреме майски карттус хăлхана шăнтай̆, анклиски хвассунлă пађтту—ăшă тытмасй̆, йĕри таврах çил выђай̆,—ђупатăп вара, ăшăнас тесе.

Ĕлĕк „Тавай кĕретĕп“ текен пивной пурђĕ вĕтха. Çав пивной тĕлне çитсен куçа хупрăм та (курмасăр иртсе кайас тесе), тата хытăрах ђупма тытăнтăм, вăтăр пус укçана шалти йĕм кĕсйине пытарса хутăм—ђейе вĕт ха та...

Унђђен те пулмарĕ,—лађ!—т у р ĕ сăмса.

— Ех, воймай̆, терĕ тепĕр сăмса хуçи те, **пăркă** трупинсен купинђи пĕр трупине çатăртаттарса тытрĕ, анђах трупа ытла йăвăр пирки кăна мана тытса çапмарĕ:—Пĕлетĕп епĕ есĕ «Капкăн» йăтти иккенне, тесе йулђĕ.— Лекĕнха, ху та, тет мана.

Те турă мунђине вут тĕртнĕ, те турă пăрушне пусса çинĕ ман çине çиленме! Çиленђђĕрех. Епĕ кăçал пур-пĕрех çырмастăп. Килес çулђђен канас пăртак, елементсен хăлхисем те канђђăр. 1928-мĕш çулта, йанвар уйăхĕнђе «Капкăна» хыптармалли ширнуй татăксем пуçтарăнђăр тата. Унтан вара çĕнĕ вăйпа, çĕнĕ телейпе... Сисетĕн ĕнтĕ мĕн пулмаллине.

Çĕнçулђђен сывă пулса тăрха, ретакси! Ех, Капкăн хуçи! Сан çине те «Макар шыпкисем» ӳкеççĕ çав... кан çĕнçулђђен, есĕ те...

Ну, сывă пул. Сана ырă сунакан

ЕТМЕН А.

# Ĕçе кĕнĕ.




— Итлеха, йулташ! Манăн сайавлени çапах сĕтел çинђи сукна айĕнђе.

— Çук, есĕ кăна суйатăн. Вăл сукнаран епĕ ĕлĕкех хам ађа вађђи йĕм çĕлетрĕм.

М а м ă к.

# ÇĔНĔ ÇУЛТАН

„Пирĕн йал“ йатлă ернере пĕрре тухакан хаçатпа „Капкăн“ çырăнса илĕр!

## Хаçатпа „Капкăн“ хакĕ:

| | | | |
|---|---|---|---|
| 1 уйăхлăха | 15 пус. | 6 уйăхлăха | 75 пус. |
| 3 „ | 45 „ | 12 „ | 1 т. 50 „ |

## Ушкăнăн çырăнса илекенсене çакăн пек парнесем паратпăр:

1. Пĕр йалта çпискă тăрăх 10 çын 6 уйăхлăха çырăнса илсен, çав 10 çынна Ђăвашла пĕр кăлентар, потпискă пухакана 3 уйăхлăх „Ђăваш йалĕ“ паратпăр.

2. 20 çын 6 уйăхлăха çырăнса илсен—1 çурла, потпискă пухакана—6 уйăхлăх „Ђăваш йалĕ“ йаратпăр.

3. Ие 10 çын çулталăклăх çырăнса илсен—вĕсене пĕр çурла, потпискă пухаканне 3 уйăхлăха „Сунтал“ йаратпăр.

4. Ие 20 çын пĕр çулталăка çырăнса илсен, çав 20 çынна—1 çава; потпискă пухакана—3 уйăхлăх „Капкăн“, „Сунтал“, „Ђăваш йалĕ“ укçасăрах йаратпăр.

Çав премисене, „Пирĕн йалпа“ „Капкăн“ çырăнса илекенсем хăйсем хушшинђе шăпа тăрăх выљаса илеççĕ.

# Ĕçсем нумайланаççĕ.




**Иалти ваккат**: Раштав çитсен... ух! вара! Ђăвашсем ĕçсе тултараççĕ те, çапăçма тытăнаççĕ. Кайран, сут вађђи сайавленисем çырмалла пулсан, мансăр пулас çук.

Отв. редактор **А. Золотов.**

Чувашлит № 2342 Чебоксары, тип. „Чувашская Книга“.